# ÇИРĔП ЧĂМĂРЛĂ ИЛЕМ



**Лена Перкова 1991 çулхи пуш уйăхĕн 14-мĕшĕнче Муркаш районĕнчи Кораккасси ялĕнче çуралнă. Çемьере тата Таня йăмăкĕ пур. Халĕ вăл 7-мĕш класра вĕренет.**





**Лена Перкова спорт мастерĕн кандидачĕ. Çак ята вăл 2006 çулта тивĕçнĕ.**

Лена вара Калайкасси шкулĕнчи 10-мĕш класра вĕренет. Вăл спортпа питĕ туслă. Ара, хĕр ача контактлă спорта юратать, каратэ секцине çӳрет. Çӳрет кăна мар, тĕрлĕ ăмăртусенче хутшăнса Хисеп хучĕсене тивĕçет, призсем çĕнсе илет. Нумаях пулмасть Мускавра иртнĕ Раççейри ăмăртуран таврăнчĕ. Тĕленмелле те, савăнмалла кăна. Пире паллах, Лена каратэпе туслă пулни кăсăклантарать. Тепри хĕр ачасем валли мар ку ĕç тесе калама та пултарать. Анчах та паянхи саманара çирĕп чăмăрлă пулмалла. Çавăнпа та черчен те хӳхĕм хĕрача каратэпе туслă пулни кăсăклă. Пурнăçра тем те пулма пултарать. Тен, ун пекки ан пултăр паллах, хăвна та хӳтĕлеме тивĕ.



**— Каратэпе хăçан кăсăкланма пуçланă?**

— Пĕррехинче, эпĕ 6-мĕш класра вĕреннĕ чухне Евгений Ерагин вĕрентекен шкула Вячеслав Тимофеев Чăваш Республикин каратэ спорт пĕрлешĕвĕн президентне хăнана илсе килчĕ. Пире линейкăра каратэ секцине çырăнма сĕнчĕç. Эпĕ евтӳ /заявлени/ çыракансенчен чи пĕрремĕш пултăм. Халĕ те çакна лайăх астăватăп. Тренировкăсене çӳреме пуçларăм.

**— Пĕрремĕш ăмăрту асра юлчĕ-и?**

— Паллах. Ăмăрту 2004 çулхи ака уйăхĕн 4-мĕшĕнче Шупашкарта иртрĕ. Ун чухне 1-мĕш вырăн çĕнсе илтĕм. Чи малтан питĕ хăранăччĕ. Опыт çукки те, паллă мар лару-тăру та сехĕрлентернĕччĕ. Çавăн чухне ката ирттернипе тупăшмалла пулчĕ. Мана чи ăсти тесе йышăнчĕç. Çавăнтанпа эпĕ çак çӳллĕ шайран анман.

**— Мĕнле шутлатăр, çак спорт хĕрачасене кирлĕ-и?**

— Каратэ секцине çӳриччен манăн кăмăл çирĕплĕхĕ хавшак пулнă. Халĕ вара палăртнă тĕллевсене ялан пурнăçлатăп. Кĕрешӳ меслечĕсенчен мана самбопа кĕрешӳ пачах та килĕшмеççĕ. Каратэ кăна илĕртет. Çак спорт хама хӳтĕлеме кирлĕ. Пĕррехинче, Шупашкарта каçпа тренировкăран таврăннă чухне,



«Энергозапчасть» чарăну патĕнче мана тус-хĕр хыççăн пĕр арçын утма пуçларĕ. Кайран тепри хутшăнчĕ. Вĕсем пирĕн çума çулăхрĕç. Хамăра хӳтĕлеме тиврĕ. Каратэпе туслă пулман пулсан лару-тăру пирĕншĕн япăх та пулма пултарнă.

**— Эсĕ каратэ секцине çӳрени çине йăмăк мĕнле пăхать?**

— Савăнать.

**— Эсĕ мĕн çинчен ĕмĕтленетĕн?**

— Тĕнче шайне тухас килет. Унсăр пуçне пуш уйăхĕнче Хусанта иртекен ăмăртура çĕнтерсен спорт мастерĕ ята илме пулать.

**— Саншăн чи хакли, пĕлтерĕшли?**

— Маншăн пулăмсем чи хакли. Эпĕ пулăмсенче аталанса пыратăп, хама валли çул уçатăп. Хам çине кăна шанмалла тесе шутлатăп.

**— Пĕрле вĕренекенсем сан çине мĕнле пăхаççĕ? Тен, ăмсанаççĕ е кĕвĕçеççĕ?**

— Паллах, савăнаççĕ. Тен, кĕвĕçни те пулкалать. Анчах та ăна уççăн кăтартманчĕха.

**«ХП»**

## КОНКУРСА ХУТШĂНАР—И?

Чăваш Республикинчи пушара хирĕç кĕрешес управлени Раççейри пушар хуралĕн кунне халалласа «Пушар тата ачасем» ятлă конкурс ирттересси çинчен хушу кăларнă. Ĕçсене ака уйăхĕн 20-мĕшĕччен ярса пама пулать.

***428000, Шупашкар хули, Карл Маркс урамĕ, 37, Пушара хирĕç пропагандăлас тата общество çыхăнăвĕсен центр /центр противопожарной пропаганды и общественных связей/ адресĕпе çырса ямалла, «На конкурс» «Огонь и дети» тесе палăртмалла.*** Çыхăнас тесен 62-12-56 телефонпа шăнкăравламалла. Конкурс пĕтĕмлетĕвĕсем ака уйăхĕн 30-мĕшĕнче пулĕç.

Конкурса тĕрленĕ ĕçсене, панносене, макетсене, пушара хирĕç кĕрешес тематикăпа çыхăннă пур ĕçе те йышăнаççĕ. Ĕç теми, техники, матерелĕ тĕрлĕрен пулма пултарать.

Çĕнтерӳçĕсене хаклă парнесем кĕтеççĕ.

## *САЛАМСЕМ*

*Очăкассишкулĕнче нумай çул хушши ĕçлекен сумлă вĕрентекене, ырă кăмăллă Лариса Леонидовна Герасимовăна тата шкул завучне, пултаруллă ĕçчене Татьяна Николаевна Мясниковăна çуралнă кун ячĕпе чунчĕререн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, ăнăçу сунатпăр.*

***Шкул администрацийĕ***

8А класра вĕренекен Григорьев Димăна, тата Дмитриев Сашăна Çĕр-шыва хӳтелекенсен кунĕ ячĕпе саламлатăп, ырлăх-сывлăх, телей сунатăп.

**Салампа**
**Юра ОСИПОВ, 7 класс,**
**Калайкасси шкулĕ.**